*А.А. ТРОФИМОВ*

# ХАЛĂХĂН КАПĂР ТУМĔ ТАТА УНĂН КУЛЬТУРА АТАЛАНĂВĔНЧИ ВЫРĂНĔ

Çирĕммĕш ĕмĕр тĕрлĕ йышши идеологиллĕ, политикăллă, социаллă вăйсен кĕрешĕвĕпе тата халăхăн нушитерчĕпе тулнă. Кунта чăваш нацийĕн йывăрлăхĕпе асапĕ те, пултарулăхĕпе чапĕ те шăнăçса вырнаçайнă. Харкашуллă, вăрçăллă ĕмĕр (вăл мана темшĕн ыттисенчен вăрăмрах пек туйăнать) вĕçленсе пырать. Тăват-пилĕк çултан XXI çĕр çуллăх пуçланать, самана ылмашăнать. Пĕр енчен илсен — паянхи кун тĕлли-паллисĕр, пăтранчăклă йывăр вăхăт, тепĕр енчен — шăпах çак вăхăтра наци сăнне, сăнарне лайăхрах, уçăмлăрах куратпăр, унăн вăйне, мехелне туллин туятпăр.

Паянхи пурнăçра халăхăн капăр тумне çĕнĕрен чĕртсе аталантарасси çинчен калаçнине пĕрисем «пуш сăмах» теме хăяççĕ, теприсем ку ыйтăва «язычествăна чун кĕртесси» пек хаклама хăтланаççĕ. Паллах ĕнтĕ, ку сăмах-юмах нацие хисепе хуманнипе, унăн культурине пачах та пĕлменнипе, кĕвĕçӳпе е, урăхла каласан, вăхăт чирĕпе çыхăннă.

Халăхăмăрăн капăр тумĕ — пин-пин çул аталаннă пысăк искусство. Ун тытăмĕнче Азипе Европăри чи авалхи цивилизаци йĕрĕсем палăраççĕ, тĕрлĕ йăхсемпе халăхсен культура витĕмĕ сисĕнет. Халăх тумĕ — хăйне евĕрлĕ, ялан аталанса пыракан ăсталăх, унăн хăйĕн саккунĕсем пур. Вăл вилĕмсĕр. Ăна чĕлхепе çеç танлаштарма пулать-тĕр. Çав вăхăтрах историре паллă: чĕлхе çухалма пултарать, анчах капăр тум хăйĕн пурнăçне, илемне, вăйне малалла тăсать (сăмахран, Дунайçи пăлхарсен историйĕ çавнашкал). Халăхăн капăр тумĕ нумай чухне тĕн идеологине те парăнмасть.

Мăсăльман тĕнне йышăннă чăвашсен чĕлхи тутарланнă. Çапах та вĕсен уйрăм ушкăнĕсем аваллăхран илсе килнĕ хăйсен капăр тумне упраса хăварма пултарнă. Чăвашсене Вырăс патшалăхне кĕртсен, пĕр культурăпа тепĕр культура ылмашăвĕн тапхăрĕ пуçланать. Анчах ку самана та халăхăн капăр тумне пăрахăçа кăлараймасть. Каярах Христос тĕнне йышăнтараççĕ — çапах чăваш тумĕ аталанма чарăнмасть!

Чĕмпĕр шкулĕнче чăвашсен професси шайĕнчи культури çуралса ураланма пуçлать. Вăл пуринчен ытла классикăлла формăсем килĕштерет. Ăна Хĕвеланăç Европа культурин сĕмĕ кĕрет. Çак витĕм — уйрăмах ӳнер культуринче — Петербургпа Хусан урлă пулса пырать. Чĕмпĕр шкулĕ тĕрĕ ăсталăхне те профессионалла тытăмсем, çĕнĕлĕхсем илсе килет. Çакă, паллах, авалтан килекен халăх ӳнерĕн никĕсĕ çинче пулса пырать.

Обществăн пĕр формацийĕ тепринпе ылмашăннă тапхăрта халăхăн ӳнер аталанăвĕнче тин çеç шăтса тухнă эртелсен вăйăмĕ сисĕнме пуçлать. Чăваш автономийĕн малтанхи çулĕсенче вĕсен шучĕ çĕртен те иртнĕ. Вăл вăхăтра чăвашсем катан пирне те, çипне те кӳршĕсенчен кивçен илмен. Урăхла каласан, капăр тумне аталантарас шухăшпа ыйткалама тухса кайман. Кашни кил-йыш, хуçалăх мĕн кирлине хăйсемех хатĕрленĕ. Шел, çакăнпа пĕрлех 20–30-мĕш çулсенчи самана чăвашсен капăр тум эткерне хăрушла аркатса хăварнă. Культура аталанăвĕн ирĕклĕ çул-йĕрĕ хĕсĕкленсе юлнă. Ун чухне «хĕрлĕ улахсене», «культура ăмăртăвĕсене» культурăри чи пысăк çитĕнӳсем тесе ĕненнĕ. Авалтан килекен халăх культурине — çав шутра капăр тума — иртсе кайнă кивĕ пурнăçпа, тĕшмĕш-тĕттĕмлĕхпе çыхăнтарнă. Колхоз пуçланнă çулсенче те, кайрантарах та ялсенче лавĕ-лавĕпе хушпу-тухья, ама-шӳлкеме пуçтарса патшалăха панă. Çак йĕрке Атăлпа Шур Атăл, Уралпа Çĕпĕр тăрăхĕсенче те анлăн сарăлнă. Икĕ хушпуллă çемьене «кулак» теме пăхнă. Халăхăн капăр тумĕнче те обществăри классен паллисене шырама пуçлаççĕ. Çапла вара «совет культури» ăнлав çуралать.

Кĕскен каласан, совет саманин малтанхи тапхăрĕ, *пĕр енчен илсен*, эртелсем пуçарса ярать (паллă-

раххисем: «Хантăсла тĕрĕ, «Тĕрлекен», «Паха тĕрĕ», «Художник», «Ĕçчен», «Большевик»), вĕсен тĕрĕ-эрешне Франципе, Америкăра, Германире тата ытти çĕршывсенче пулса иртнĕ выставкăсенче кăтартаççĕ; *т е п ĕ р е н ч е н* — халăхăн капăр тумне пĕтерме пулăшать. Çапла 30-мĕш çулсенчен пуçласа 60-мĕш çулсем таранах чăвашра хушпу-тухья тăвакан пĕр ăста та пулман темелле. Тĕрĕсрех каласан, çав ĕçе пĕлекенсем сахалланса юлнă, çипуç капăрне ăсталама пăрахнă. «Коммунизм тунă» тапхăрта халăх хăйĕн капăр тумĕсĕр тăрса юлчĕ. «Паха тĕрĕ» эртелтен «фабрика» туса хуни те çав саманари пулăмсемпех çыхăннă. Хулари чăваш чăвашла калаçма, тĕрĕллĕ кĕпе тăхăнма вăтанатчĕ. Çак киревсĕр пулăма, капăр тум аталанăвĕнчи чире интеллигенцин пĕр пайĕ лайăх туйса ăнланнă. Ахальтен мар ĕнтĕ чăваш халăх поэчĕ Петр Петрович Хусанкай Кубăна кайма Екатерина Иосифовна Ефремова эскизĕпе хăйне валли тĕрĕллĕ шупăр çĕлеттерет. Ку тĕслĕх чăваш эстетикин аталанăвĕнче чи курăмлисенчен пĕри. Вăл хăйĕн вăйĕ-шайĕпе Чĕмпĕр шкулĕнче вĕренекен тĕрĕçсем Иван Яковлевич Яковлева парнеленĕ тĕрĕсене аса илтерет.

1960 çулсенче «халăх пултарулăхĕ пĕтет, ăна машина производстви улăштарать» текен теори çуралнă пулсан, 70-мĕш çулсен вĕçĕнче ку теори вăйĕ пĕтсе ларчĕ, каярахпа вăл пачах çухалчĕ. Шăпах çав тапхăр хыççăн халăх пултарулăхĕ çĕнĕрен чĕрĕлме пуçларĕ. Шупашкарти ăстасенчен чи малтанах В.А. Прохорова, В.А.Минеева, Е.Н.Жачева, В.П.Сухарев, Л.А. Конорева, Т.И. Петрова, Н.Ф. Ильина, Е.М. Календарева ячĕсене палăртас килет. Ун чухне республикăри кашни ялтах темиçе ăста пурччĕ. Кунта М.Т. Юркина, А.Н. Походкина, Г.А. Зайцева, Л.Н. Батырева, А.Ф. Федорова, М.Н. Яковлева (В.Н. Яковлев режиссерăн арăмĕ) ячĕсене асăнса хăвармасăр иртме çук.

Ульяновск облаçĕнче пурăнакан А.П. Яругина, Л.Ф. Чатта, Е.Д. Еливанова, Самар облаçĕнчи Р.В. Никитина, К.А. Медведева, Тутарстанри О.А. Кудинова, В.Н. Васильева, Е.В. Кузьмина т.ыт. ăстасем ыра ята тивĕç.

Ал ăстисем Шур Атăлпа Урал тăрăхĕнчи ялсенче те сахал мар. Кунта уйрăмах Пушкăртри О.А. Ягушева, З.Т. Григорьева, А.В. Иванова, А.П. Тимофеева, Оренбург облаçĕнчи Н.И. Сафронова, А.А. Федорова, Н.С. Тихонова ячĕсене

палăртса хăвармалла.

Тĕрлĕ çĕрте пурăнакан ăстасене ырăпа аса илнĕ май пĕр тĕслĕх илсе кăтартасшăн. 1987 çулта Наука тĕпчев институчĕ Урал тăрăхĕнчи чăваш ялĕсенче экспедици ирттернĕччĕ. Экспедици çыннисем 31 яла çитсе курчĕç. Ун чухне çак ялсенче пуринче те хушпу-тухья ўнерĕ аталанатчĕ. Вĕсене курсан çын тĕлĕнсе тăмалла. Паянхи ăстасем иртнĕ ĕмĕрсенчи çипуç капăрĕсене чăн эталон тесе шутлаççĕ. Ку тăрăхра авалхи хушпу-тухья сахал мар сыхланса юлнă. Сăмахран, Аургаза районне кĕрекен Чăваш Кармали ялĕнче 1987 çулта XVIII–XIX ĕмĕрсенче ăсталанă 30 яхăн хушпу, тухьяпа тевет упранатчĕ. Ку яла ытти çĕртен ĕлĕкхи капăр тума курма çўретчĕç. Кĕскен каласан, хушпу-тухья аталанăвĕнче традиципе паянхи кун çыхăнăвĕ сисĕнетчĕ.

Ку тĕслĕхсемпе эпĕ çакна каласшăн: халăхăн капăр тумĕн паянхи аталанăвĕнче авалтан килекен мелсемпе йĕрке-туртăм палăрма тивĕç. Ялсенчи çипуç капăрне унтах упрама тăрăшмалла. Çакă иртнĕ ĕмĕрсен илемне паянхи кунпа çыхăнтарма пулăшать. Тепĕр тесен, асатте-асаннесен эткерне «каçунни» çуртра мар, килте упрани кил-йыш пуянлăхĕпе мухтавĕ, пурнăç техĕмĕ пулса тăрать.

Анчах, мĕн тăвас ĕнтĕ, халăхăмăрăн пурнăç шăпи çавнашкал тўрре килчĕ пуль. Кукамай калашле: пуçлăхсем кăнттам, саманисем асаплă, вăхăчĕсем йывăр пулчĕç. Чăвашсен тухйи-тевечĕ ютсене ĕмĕр-ĕмĕрех ăмсантарнă. 1921–1922 çулсенче Америкăн АРА акционер компанийĕ тата МФТЮ организацийĕ Атăлпа Шур Атăл, Урал чăвашĕсенчен пин-пин çипуç капăрĕ пухса хăйсем патне ăсатнă. Колхоз тунă тапхăрта пăхăр укçаллă, кĕмĕл тенкĕллĕ, тĕрлĕ тĕслĕ шăрçаллă капăрсене Канаш станцине леçнĕ — патшалăха пулăшнă имĕш.

Хальхи вăхăтра Наци музейĕнче 10–12 хушпупа тухья упранать. Тепĕр чух эпир, шухăшлама пĕлмен çынсем пек, çак мулпа та мухтанасшăн хăтланатпăр. Ăна, пуянлăх тесе, фондра упранçи пулатпăр... Упранакан эткере халăха кăтартасчĕ. Кăтартни çеç мар, унпа ĕçлеме пĕлесчĕ, çамрăксене вĕрентесчĕ. Çак ĕçре Чăваш наци музейĕ Халăх пултарулăхĕн республикăри ăслăлăхпа ăслай центрĕн тĕп шкулĕ

пулма тивĕç. Анчах халлĕхе çак икĕ организаци (хăйсем пĕр министерствăрах) пĕр-пĕрне ăнланаймаççĕ, пĕр чĕлхе тупаймаççĕ.

Паянхи ыйтусем патне куçнăран ку чухнехи аталану çинчен каласшăн. Хальхи вăхăтра чăваш халăхĕн капăр тумĕ кулленхи пурнăçпа йăла-йĕркере çеç мар, искусствăн тĕрлĕ пайĕсене кĕрсе те аталанать. Ăна фольклор уявĕсенче тата профессионалла сцена пултарулăхĕнче куратпăр.

Уявсенче яланах искусствăн тĕрлĕ тĕсĕсем вырăн тупаççĕ — юрă сăмахĕ, музыка, хореографи, капăр тум пĕр пулса сăнарлăх çуратаççĕ. Сăнар витĕмĕ ӳнер вăйĕсем пĕр-пĕринпе килĕшӳллĕ пулнинчен килет. Хальхи вăхăтра республикăри кашни фольклор ушкăнĕнех хăйĕн тумĕ пур. Капăр тумпа пĕрле чăвашсен виçĕ этноушкăнĕн ӳнерĕ те аталанать темелле. Кашни ушкăнăнах ĕмĕртен килекен пуян традицисем. Çакăн пек этнос тĕсĕсем пулни пирĕн халăха, унăн искусствине пуянлатма пулăшать. Анчах, питĕ шел, чылай чухне вĕсен уйрăмлăхĕсемпе пĕлсе усă кураймастпăр. Илем традицийĕсене чухлайманнипех ĕнтĕ капăр тум хăй сăнне çухатать, час-часах арпашăва — эклектикăна куçса каять. Паянхи арчара выртакан ĕлĕкхи япаласен хакĕ пĕр тан мар. Вĕсенчен нумайăшне халăх ӳнерĕ сӳнсе вăйсăрланнă тапхăрта хатĕрленĕ. Çапла вара, авалхи тесе, алли çыпçăнакан ăстах хăйне хăй улталать. Халăхăн капăр тумне çĕнĕрен чĕртсе аталантарма шухăшлатпăр пулсан, пирĕншĕн чи пахи XVIII ĕмĕрте ăсталанă произведенисем пулма тивĕç. Ку сăмахсене каланă чухне эпĕ Европăри Ренессанс тапхăрне аса илесшĕн. Ренессанс пуçарăвĕнче унран маларах аталаннă илем тĕп вырăнта. Чăвашсен культура Ренессансĕ те — паллах, çуралма пултарайсан — авалхи илем çăлкуçĕнчен сиплĕх те хăват илĕ. Çакă вăл — наци ӳнерĕн аталану саккунĕ.

Профессионалла сцена çинчи капăр тум пирки çапла каласшăн: вăл йăлтах произведени жанрĕнчен килет. Кунта çакна та палăртса хăвармалла: спектакль тавраш халăх пурнăçĕпе, йăли-йĕркипе çыхăннă пулсан, традициллĕ капăр тум сăнарсене уçса пама вăй парать, тĕрĕслĕхе кăтартать, ĕненмелле тăвать. Анчах паянхи профессионалла сцена çинче час-часах авалхи капăр тума пĕлменни, сума суманни, унăн асамлăхĕпе, шалти символ пĕлтерĕшĕпе уçăмлăн усă курайманни палăрать.

Сӑмахран, «Нарспи» оперӑра Нарспи хӗр чухне те, качча тухсан та кӗскӗллӗ кӗпепе. Чӑваш тумне ӑнланман ҫыншӑн ку темех мар. Ҫав вӑхӑтрах мӗн авалтан килекен эткере, халӑх ӑс-хакӑлне, ӗмӗрсем хушши аталанса ҫирӗпленнӗ ырӑ ӑнланусене упрас текеншӗн ку пысӑк терт те, чун сивлекӗ те. Мӗншӗн тесен ӗлӗк-авал та, 20–30-мӗш ҫулсенче те чӑваш хӗрачисемпе пӗве ҫитнӗ хӗрупраҫӗ кӗскӗллӗ кӗпе тӑхӑнман. Ку тӗрре, космогонипе ҫыхӑннӑскере, хӗрарӑм кӑкӑрӗ умне тӗрленӗ. Ҫавӑн пекех вӑл туй минтерӗ, пӗркенчӗк, ҫулӑк тыт. япаласем ҫинче тӗл пулать. Ҫапла вара нацин идеалне — илем пикине качча тухиччен кӗскӗллӗ кӗпе тӑхӑнтарни ирӗксӗрлесе хӗрлӗхе пӑсни, халӑхӑн сисӗмтуйӑмне ҫӗмӗрни пулса тӑрать. Опера курса ларакан умӗнче пачах урӑх сӑнар ҫуралать, ырӑпа тасалӑх вырӑнне усаллӑх йышӑнать.

Фольклор уявӗсенчи ҫамрӑк арҫын ачасем те халь кӗскӗллӗ кӗпепе. Пике хушпу тӑхӑнать, хӗрарӑм — тухья. Кӗписене вара мӗнле кӑна тӗрӗпе каркаламаҫҫӗ-ши? Ку пулӑмсене эпӗ киревсӗр тесе каласшӑн. Вӗсем чӑвашлӑха сухатма пуҫланине палӑртаҫҫӗ. Ӗлӗк уява улача кӗпе тӑхӑнса тухма юраман — ваттисем вӑрҫнӑ, ҫылӑх пулать, уйри тырра пӑр ҫапать тесе ӗненнӗ.

Юлашки икӗ-виҫӗ ҫул хушшинче чӑваш пит-куҫӗпе сӑнарӗ уҫӑмлӑн курӑнма пуҫларӗ. Паян унӑн юн тымарне тытса пӑхсан, чӗре таппи вӑл сывалнине кӑтартать. Унӑн вӑйӗ пур. Апла-тӑк мӗн тума пулать-ши ҫак саманара? Ҫак ыйтӑва малтан Чӑваш Республикин Патшалӑх Совечӗн Культура, вӗрентӳ, ӑслӑлӑх тата наци хутшӑнӑвӗсем енӗпе ӗҫлекен комитетра пӑхса тухма сӗнес килет. Паллах ӗнтӗ, ку ӗҫе пурнӑҫлама тӗплӗн хатӗрленмелле. Уйрӑмах РНМЦӑн тӑрӑшма тивет. Мӗншӗн тесен хальхи вӑхӑтра республикӑра унсӑр пуҫне капӑр тум ыйтӑвӗпе ӗҫлекен пӗр орган та ҫук. Чӑннипе каласан, халлӗхе ҫак ӗҫ унта та йӗркеленсех ҫитеймен. Ку тӗлӗшпе ҫакӑн пек сӗнӳ пур: РНМЦӑн капӑр тум хатӗрлес тӗлӗшпе семинарсем ирттермелле, курссем тата ӑсталӑх лабораторийӗсем йӗркелемелле.

Чӑваш Республикин Культура тата наци ӗҫӗсен министерствине халӑх пултарулӑхне аталантарас енӗпе ӗҫлекен Координаци канашӗ тума сӗнес килет. Ҫавнашкал совет Раҫҫей

Федерацийĕн Культура министерствинче 1992 çултанпа ĕçлет. Координаци совечĕсем кӳршĕ республикăсемпе облаçсенче те пур.

Тепĕр пысăк ыйту. Хальхи вăхăтра республикăн ĕçчен алăсемсĕр пуçне урăх нимĕн те çук темелле. Катан пир, сăрă республика тулашĕнче, тĕрлĕ çĕрте шырамалла, шырасан та тупăнасшăнах мар. (Ку ыйтăва пуринче ытла «Паха тĕрĕ» ĕçтешлĕхĕн директорĕ Г.И. Иванов тата капăр тум илемлетекен художниксемпе ăстасем лайăх ăнланаççĕ ĕнтĕ.) Çакна шута илсе, Чăваш Республикин правительствинчен уйрăм хуçалăхсенче йĕтĕн-кантăр акса ӳстерес, пир-авăр хатĕрлес ыйтăва татса пама сĕнес килет.

Чăваш Республикин ӳнер ăстисен «Паха тĕрĕ» ĕçтешлĕхĕ халăхăн капăр тумне ăсталаса кăларакан тĕп предприяти пулмалла. Унта художник-модельерсен йышне ӳстересчĕ.

Халăхăн капăр тумне, выставкăсем йĕркелесе, Чăваш Республикинче çеç мар, ытти чăвашсем патĕнче те, ют çĕршывсенче те кăтартма тăрăшмалла.

Чăваш Республикин Ăслăлăхпа ӳнерсен наци академийĕн, Культурăпа наци ĕçĕсен министерствин, Чăваш патшалăх гуманитари ăслăхĕсен институчĕн, Халăх пултарулăхĕн республикăри ăслăлăхпа ăслай центрĕн Атăл, Шур Атăл, Уралпа Çĕпĕр тăрăхĕсенче пурăнакан чăвашсем патне наука экспедицийĕсем йĕркелемелле, ăстасене шута илес тата халăх пултарулăхĕн аталанăвне тишкерес тĕллевпе ятарлă тĕпчевсем ирттермелле.

Çакăнпа пĕрлех капăр тума аталантарас ĕç Чăваш наци конгресĕн планĕнче те тивĕçлĕ вырăн йышăнасса шанас килет.

Эпир çирĕмпĕрмĕш ĕмĕрĕн кĕç-вĕç уçăлса каяс хапхи умĕнче тăратпăр. Пулас ăру ӳпкелешӳллĕ ан пултăрччĕ. Вăл та капăр тум — тăван халăхăн капăр тумне — тăхăнтăр.